К 63.3(-5Кра)
Д18
Ч-49258

**Виктор Данилов**

# Пурӑн, Еншик Чуллӑ, пурӑн!



**Красноармейски ялӗ-2017**

Национальная библиотека ЧР
4-049258

К63,3(-5Кра)
Д18

ВИКТОР ДАНИЛОВ

# ПУРĂН,
# ЕНШИК ЧУЛЛĂ,
# ПУРĂН!

Красноармейски сали – 2017

63.3(2Рос.Чув-5Кра-2Яншихово-Челлы)
+К63.3(5Кра-2Яншихово-Челлы)

Çак кĕнекене автор хăйĕн 60 çулхи юбилейне халаллать. Унта вăл – тăван тăрăхĕ – Еншик Чуллă ялĕпе унăн хастар çыннисем çинчен каласа парать.

И-49268

Национальная библиотека
Чувашской Республики

# 1. Ум сăмах

Тăван савнă ялăм – Еншик Чуллă – акă, хальхинче те тараватйышăнчĕ мана. Кашнинчех çапла-ха. Çыннисем вара пĕри тепринчен ырă, кăмăллă та сăпай кунта. Паллакансене курсан, чун-чĕре татах та хĕпĕртет, сиксе тухасла тапать. Мĕншĕн тетĕр-и? Мĕншĕн тесен ку тăрăхпа манăн пĕтĕм пурнăç çыхăннă. Çак енре эпĕ çĕр çине килнĕ, атте-анне пулăшнипе утма хăнăхнă, шкул çулне такăрлама пуçăнсан, пĕрремĕш учительница - хамăр ялти Тамара Трифоновна Ефремова çине тăнипе саспаллисене паллама пуçланă, шутлама-çырма вĕреннĕ, тус-тантăшсемпе вунă çул пĕрле пулнă хыççăн аслă пĕлӳ илме талпăннă. Çарта чухне те тăван ял пуçран тухман. Икĕ çултан вара унăн ытамне каллех лекрĕм. Ял сиплĕ сывлăшпа пархатар кӳнипех хама килĕшекен ĕç тупрăм. Хĕрĕх çул хушши çыравçă сукмакне такăрларăм. Çапах çак тапхăрта та хама пурнăç сăпкинче сиктернĕ яла, унăн сиплĕ те уçă сывлăшне манăçа кăлармарăм. Пушă вăхăт тупăнсанах унта çитме васкарăм.

Ачаран выляса ӳснĕ Йӳç çырми, Чулпуç, Сĕвек ту, Мăн Хăртнă хăйсем патне йыхравлаççĕ те, вĕсенче тăтăшрах пулма тăрăшатăп. Кашнинче çитмессерен капăртарах та илемлĕрех туйăнаççĕ вĕсем. Ял варринчи Йӳç çырминче пĕчĕк чухне хĕл кунĕсенче йĕлме йĕлтĕр йĕрри хывăнмасăр пĕр кун та иртмен темелле. Эх, савăнаттăмăр çырмара çуна-йĕлтĕрпе ярăнса. Йĕлтĕрĕсем хальхи евĕр пĕртте чаплисем пулман. Вĕсене шăллăмпа иксĕмĕре валли атте ятарласа вĕри мунчара авса туса панăччĕ. Уроксем хыççăн ярăнса уçăлма 30-40 ачаран пĕртте сахал тухман. «Ваçли пĕви» (çав ятлă çын кил-çурчĕ çывăхĕнче

пулнăран пĕвене çапла ят хунăччĕ) çинче хоккейла вылянăран таврана каç сĕмĕ çапнине те сисместтĕмĕр. Командăсем çине пайланса выляттăмăр. Инçех те мар тепĕр çырма – Чулпуç. Хăй вăхăтĕнче кунта чул кăларнăран çапла ят панă теççĕ ваттисем. Вăрăма тăсăлать вăл. Сип-симĕс курăк ешеретчĕ. Сивĕ те сиплĕ тата тăп-тăрă шывлă çăлкуç та пурччĕ. Кӳршĕ ачисемпе ĕне çитерсе çӳреттĕмĕр унта. Выльăх çăвар тулли курăк çинĕ хушăра вăйăсем выляттăмăр. Савăк пулнах çав пире. Аяларах – Сĕвек ту çырми. Тарăнскер. Ун çывăхĕнче тăван «Прогресс» колхоз епле пысăк сад чĕртнĕччĕ. Çывăхрах хăяр-помидор çитĕнтеретчĕç. Вĕсене, улма-çырлана ĕç кунĕпе те валеçетчĕç. Ача чухне Măн Çавал юхан шывĕн улăхне купăста шăварма та, утă пуçтарса типĕтме те сахал мар çӳренĕ. Ял çумĕнчи вăрманти Măн Хăртнă уçланкинче те час – часах пулатăп. Чăн та, уçланкă теме йывăртарах-ха ку чухне ăна: хурăн-чăрăш самаях çӳле çĕкленнĕ. Унччен те, халĕ те кăмпа тавраш нумай ку вăрманта.

Тăван ялти аслă ăру çыннисемпе курнăçса калаçма кăмăллатăп. Вĕсене те ял пуласлăхĕпе унăн шăпи канăçсăрлантарать. «Çамрăксене ялта пурăнма майсем туса парасчĕ, ĕçпе тивĕçтересчĕ», - теççĕ «шур сухалсем». 2014 çултан урам тата ял уявĕсене ирттерме тытăнчĕç тăван тăрăхра. Çакăн пуçаруçисене тем пекех тав. Ял уявĕсенче кĕрлеттерсе савăнмалли пурах ентешĕмсен.

Ял урамĕсемпе те утма кăмăллатăп. Çĕнĕ çурт куç умне лексен, савăнатăп. Апла пулсан, ик çĕр ытла киллĕ (тата 140-шĕпе дача евĕр усă кураççĕ) ял пурăнать-ха. Унăн малашлăхĕ çук мар. Пилĕк çĕр ытла çын ĕçлет тата

пурӑнать ку ялта. Ҫак пысӑках мар калӑпӑшлӑ кӗнекене те шӑпах тӑван ялпа унӑн ҫыннисене халаллатӑп. Еншик Чуллӑн ӗмӗрӗ вӑрӑм пултӑр, хастарӗсенче ырӑ ӗҫ патне ӑнтӑлас кӑмӑл-туйӑм иксӗлми шывлӑ ҫӑлкуҫ евӗр тапса тӑтӑр! Пурӑн, Еншик Чуллӑ, пурӑн. Малашлӑх пур санӑн.

## 2. Ял – йыш вӗсене вӑрҫӑран кӗтсе илеймен

### 1. Еншик Чуллӑ ялӗнчен

Абрамов Федор Абрамович, 1905 ҫ. ҫ.. Рядовой. 1941 ҫулта хыпарсӑр ҫухалнӑ.

Александров Тимофей Александрович, 1920 ҫ.ҫ.. Рядовой. 1945 ҫулта хыпарсӑр ҫухалнӑ.

Анисимов Василий Анисимович, 1908 ҫ. ҫ.. Рядовой. 1942 ҫулта хыпарсӑр ҫухалнӑ.

Арсентьев Ананий Арсентьевич, 1900 ҫ. ҫ.. Рядовой. 1943 ҫулхи августӑн 27-мӗшӗнчи ҫапӑҫура вилнӗ. Орел облаҫӗнчи Шаблыкински районӗнчи Лобки ялӗнчи тӑванла масарта пытарнӑ.

Арсентьев Варфоломей Арсентьевич, 1920 ҫ. ҫ.. Рядовой. 1941 ҫулхи сентябрьте Гродно облаҫӗнче хыпарсӑр ҫухалнӑ.

Архипов Петр Архипович, 1923 ҫ. ҫ.. Рядовой. 1942 ҫулхи декабрьте хыпарсӑр ҫухалнӑ.

Афанасьев Михаил Афанасьевич, 1908 ҫ. ҫ.. Сурансене пула 1942 ҫулхи март уйӑхӗнче вилнӗ. Чулхула (Горький) облаҫӗнчи Выкса хулинче пытарнӑ.

Афанасьев Николай Афанасьевич, 1915 ҫ. ҫ.. Рядовой. 1944 ҫулхи октябрьте хыпарсӑр ҫухалнӑ.

Васильев Алексей Васильевич, 1905 ç. ç.. Рядовой. 1942 çулхи июньте хыпарсăр çухалнă.

Васильев Андрей Васильевич, 1924 ç. ç.. Çара Шупашкар хула çар комиссариачĕ урлă кайнă. Рядовой. 1943 çулхи августăн 21-мĕшĕнчи çапăçура вилнĕ. Сумы облаçĕнчи Ахтырски районĕнчи «Комсомолец» совхоз территорийĕнче пытарнă.

Васильев Борис Васильевич, 1919 ç. ç.. Рядовой. Гродно облаçĕнчи Гродно хули çывăхĕнче 1941 çулхи декабрьте хыпарсăр çухалнă.

Гаврилов Алексей Гаврилович, 1911 ç. ç.. Рядовой. 1945 çулта çапăçура вилнĕ. Ăçта пытарни паллă мар.

Гаврилов Владимир Гаврилович, 1922 ç. ç.ç. Çара Çĕрпӳ районĕнчи çар комиссариачĕ урлă кайнă. Рядовой. Сумы облаçĕнчи çапăçура 1943 çулхи сентябрĕн 12-мĕшĕнче вилнĕ. Ăçта пытарни туллин паллă мар.

Гаврилов Дмитрий Гаврилович, 1908 ç. ç.. Рядовой. Донецк облаçĕнчи Донецк хули çывăхĕнче 1943 çулта хыпарсăр çухалнă.

Георгиев Иван Георгиевич, 1902 ç. ç.. Рядовой. 1943 çулта хыпарсăр çухалнă.

Григорьев Александр Григорьевич, 1910 ç. ç.. Рядовой. 1944 çулхи ноябрьте хыпарсăр çухалнă.

Григорьев Василий Григорьевич, 1912 ç. ç.. Рядовой. 1943 çулхи апрельте хыпарсăр çухалнă.

Григорьев Федор Григорьевич, 1917 ç. ç.. Гварди аслă сержант. 1945 çулхи мартăн 23-мĕшĕнче вилнĕ. Яново хулинче (Польша) пытарнă.

Гурьев Григорий Гурьевич, 1899 ç. ç.. Рядовой. 1945 çулхи март уйăхĕнче хыпарсăр çухалнă.

Дмитриев Иван Дмитриевич, 1919 ç. ç.. Çара Владимир хула çар комиссариачĕ урлă кайнă. Рядовой. 1943 çулхи февралĕн 17-мĕшĕнчи çапăçура вилнĕ. Ленинград облаçĕнчи Волхов районĕнчи Гантовая Липка ялĕнче пытарнă.

Дмитриев Михей Дмитриевич, 1919 ç. ç.. Рядовой. 1941 çулта Литвара хыпарсăр çухалнă.

Егоров Дмитрий Егорович, 1914 ç. ç.. Рядовой. 1943 çулхи февралĕн 17-мĕшĕнчи çапăçура вилнĕ. Ленинград облаçĕнчи Волхов районĕнчи Гантовая Липка ялĕнче пытарнă.

Ермолаев Егор Ермолаевич, 1908 ç. ç.. Рядовой. 1942 çулта хыпарсăр çухалнă.

Зиновьев Александр Зиновьевич, 1910 ç. ç.. Рядовой. 1942 çулхи ноябрĕн 25-мĕшĕнчи çапăçура вилнĕ. Новгород облаçĕнчи Демянски районĕнчи кӳлĕ çывăхĕнче пытарнă.

Зиновьев Трофим Зиновьевич, 1917 ç. ç.. Рядовой. Гродно облаçĕнче 1941 çулта хыпарсăр çухалнă.

Иванов Афанасий Иванович, 1908 ç. ç.. Рядовой. 1943 çулхи мартăн 19-мĕшĕнчи çапăçура вилнĕ. Ленинград облаçĕнчи Гатчино районĕнчи Старая Мыза ялĕнче пытарнă.

Иванов Петр Иванович, 1914 ç. ç.. Рядовой. Курск облаçĕнчи Курск хули çывăхĕнчи çапăçура 1943 çулхи февральте вилнĕ. Ăçта пытарни туллин паллă мар.

Иванов Петр Иванович, 1903 ç. ç.. Ефрейтор. 1944 çулхи мартăн 23-мĕшĕнчи çапăçура вилнĕ. Эстонири Кяреконна ялĕнче пытарнă.

Иванов Семен Иванович, 1908 ç. ç.. Рядовой. 1943 çулхи февралĕн 3-мĕшĕнче хыпарсăр çухалнă.

Иванов Филипп Иванович,1911 ç. ç.. Рядовой. 1942 çулта хыпарсăр çухалнă.

Иванов Филипп Иванович, 1919 ç. ç.. Рядовой. 1941 çулта хыпарсăр çухалнă.

Ильин Феоктист Ильич, 1900 ç. ç.. Çара Шупашкар хула çар комиссариачě урлă кайнă. Рядовой. Ростов облаçěнчи Дон çинчи Ростов хули çывăхěнчи çапăçура вилнě. Ăçта пытарни туллин паллă мар.

Крнстантинов Петр Константинович, 1923 ç. ç.. Рядовой. 1945 çулхи çапăçура вилнě. Будапешт хули (Венгри) çывăхěнче пытарнă.

Лаврентьев Григорий Лаврентьевич, 1916 ç. ç.. Рядовой. 1943 çулхи ноябрьте хыпарсăр çухалнă.

Леонидов Антон Леонидович, 1919 ç. ç.. Рядовой. 1943 çулхи август уйăхěнчи çапăçура вилнě. Волгоград облаçěнчи Сталинград (Волгоград) хулинче пытарнă.

Леонидов Иван Леонидович, 1919 ç. ç.. Рядовой. Сурансене пула 1943 çулхи январěн 6-мěшěнче вилнě. Новгород облаçěнчи Старорусски районěнчи Сущево ялěнче пытарнă.

Леонидов Михаил Леонидович, 1919 ç. ç.. Рядовой. 1941 çулхи ноябрьте хыпарсăр çухалнă.

Лукин Яков Лукич, 1905 ç. ç.. Лейтенант. 1941 çулхи октябрьте хыпарсăр çухалнă.

Максимов Аверкий Максимович, 1902 ç. ç.. Рядовой. Сурансене пула 1941 çулхи декабрěн 1-мěшěнче ППГ-25-ре вилнě. Тверь (Калинин) облаçěнчи Нелидовски районěнчи Ново–Богданово ялěнче пытарнă.

Максимов Михаил Максимович, 1910 ç. ç.. Рядовой. 1942 çулхи сентябрьти çапăçура вилнě. Ленинград облаçěнчи Всеволожски районěнче пытарнă.

Матвеев Емельян Матвеевич, 1917 ç. ç.. Çара Горький хула çар комиссариачĕ урлă илнĕ. Рядовой. Мускав облаçĕнче 1941 çулхи декабрьте хыпарсăр çухалнă.

Михайлов Константин Михайлович, 1923 ç. ç.. Рядовой. 1943 çулхи мартăн 7-мĕшĕнчи çапăçура вилнĕ. Калуга облаçĕнчи Жиздрински районĕнчи Крестьянская Гора ялĕнче пытарнă, унтан вил тăприне Ослинка ялне куçарнă.

Михайлов Никифор Михайлович, 1908 ç. ç.. Рядовой. 1943 çулхи февральте хыпарсăр çухалнă.

Михайлов Николай Михайлович, 1923 ç. ç.. Çара Çĕрпӳ районĕн çар комиссариачĕ урлă кайнă. Рядовой. 1942 çулхи декабрĕн 13-мĕшĕнче хыпарсăр çухалнă.

Нестеров Федор Нестерович, 1908 ç. ç.. Рядовой. 1943 çулхи май уйăхĕнче хыпарсăр çухалнă.

Никифоров Герасим Никифорович, 1918 ç. ç.. Рядовой. 1943 çулхи мартăн 18-мĕшĕнчи çапăçура вилнĕ. Новгород облаçĕнчи Старорусски районĕнчи Жуково салинче пытарнă, унтан вил тăприне Ефремово ялне куçарнă.

Никифоров Григорий Никифорович, 1922 ç. ç.. Рядовой. 1941 çулхи октябрьте хыпарсăр çухалнă.

Никифоров Иван Никифорович, 1908 ç. ç.. Рядовой. 1942 çулхи октябрĕн 2-мĕшĕнчи çапăçура вилнĕ. Ленинград облаçĕнчи Невская Дубровка ялĕнче пытарнă.

Никифоров Петр Никифорович, 1910 ç. ç.. Рядовой. Сурансене пула 1942 çулхи ноябрĕн 17-мĕшĕнче вилнĕ. Мускав хулинче пытарнă.

Николаев Ананий Арсентьевич, 1901 ç. ç.. Рядовой. 1942 çулхи октябрьте хыпарсăр çухалнă.

Николаев Антон Николаевич, 1908 ç. ç.. Рядовой. 1943 çулхи августра хыпарсăр çухалнă.

Николаев Гурий Николаевич, 1910 ç. ç.. Аслă сержант. Ленинград хули çывăхĕнче 1942 çулхи октябрьте хыпарсăр çухалнă.

Николаев Евграф Николаевич, 1922 ç. ç.. Матрос. Севастополь хули çывăхĕнче 1942 çулхи июлĕн 3-мĕшĕнче хыпарсăр çухалнă.

Николаев Роман Николаевич, 1916 ç. ç.. Рядовой. 1941 çулта хыпарсăр çухалнă.

Николаев Федор Николаевич, 1908 ç. ç.. Рядовой. 1942 çулхи ноябрьте хыпарсăр çухалнă.

Осипов Константин Осипович, 1895 ç. ç.. Рядовой. 1944 çулхи августра хыпарсăр çухалнă.

Павлов Семен Павлович, 1902 ç. ç.. Рядовой. Сурансене пула 1942 çулхи августăн 27-мĕшĕнче ЭГ-3887-ре вилнĕ. Пушкăрт Республикинчи Ĕпхӳ хулин Сергеевски масарĕнче пытарнă.

Сергеев Николай Сергеевич, 1904 ç. ç.. Рядовой. 1945 çулхи март уйăхĕнче хыпарсăр çухалнă.

Сильвестров Федор Сильвестрович, 1908 ç. ç.. Рядовой. 1943 çулхи августра хыпарсăр çухалнă.

Степанов Филипп Степанович, 1902 ç. ç.. Рядовой. Сурансене пула 1943 çулхи майăн 8-мĕшĕнче ОМСБ-218-та вилнĕ. Смоленск облаçĕнчи Ярцевски районĕнчи Лопаткино ялĕнче пытарнă.

Тимофеев Егор Тимофеевич, 1905 ç. ç.. Çара Сĕнтĕрвăрри районĕн çар комиссариачĕ урлă кайнă. Капитан. Сурансене пула 1944 çулхи мартăн 4-мĕшĕнче вилнĕ. Псков облаçĕнчи Пустошкински районĕнчи Неведро ялĕнче пытарнă.

Тимофеев Федор Тимофеевич, 1914 ç. ç.. Рядовой. 1943 çулта хыпарсăр çухалнă.

Трофимов Иван Трофимович, 1900 ç. ç.. Рядовой. Сурансене пула 1942 çулхи июлĕн 23-мĕшĕнче 2-мĕш №-лĕ лазаретра вилнĕ. Смоленск облаçĕнчи Вязьма хулинче пытарнă.

Федоров Алексей Федорович, 1908 ç. ç.. Рядовой. 1942 çулхи мартăн 6-мĕшĕнчи çапăçура вилнĕ. Смоленск облаçĕнчи Березки ялĕнче пытарнă.

Федоров Павел Федорович, 1904 ç. ç.. Рядовой. 1943 çулта Курск хули çывăхĕнчи çапăçура вилнĕ. Ăçта пытарни туллин паллă мар.

## 2. Аслă Чуллă ялĕнчен

Абрамов Николай Лукич, 1922 ç. ç.. Рядовой. 1943 çулхи июлĕн 26-мĕшĕнчи çапăçура вилнĕ. Ленинград облаçĕнчи Гатчино районĕнчи Колодези ялĕнче пытарнă.

Александров Афанасий Александрович, 1904 ç. ç.. Рядовой. 1941 çулхи октябрьте хыпарсăр çухалнă.

Андреев Михаил Андреевич, 1913 ç. ç.. Сержант. 1941 çулхи сентябрьте хыпарсăр çухалнă.

Андреев Николай Андреевич, 1911 ç. ç.. Рядовой. 1942 çулхи мартăн 19-мĕшĕнче хыпарсăр çухалнă.

Андриянов Александр Андриянович, 1905 ç. ç.. Рядовой. 1943 çулхи декабрĕн 5-мĕшĕнчи çапăçура вилнĕ. Новгород облаçĕнчи Парфински районĕнчи М. Дубровицы ялĕнче пытарнă, унтан вил тăприне Новая Деревня ялне куçарнă.

Андриянов Алексей Андриянович, 1905 ç. ç.. Рядовой. 1943 çулта хыпарсăр çухалнă.

Андриянов Иван Андриянович, 1916 ç. ç.. Рядовой. 1941 çулта хыпарсăр çухалнă.

Андриянов Максим Андриянович, 1912 ç. ç.. Рядовой. 1941 çулхи августăн 5-мĕшĕнче хыпарсăр çухалнă.

Антонов Тимофей Антонович, 1912 ç. ç.. Рядовой. 1945 çулта хыпарсăр çухалнă.

Афанасьев Игнатий Афанасьевич, 1907 ç. ç.. Рядовой. 1942 çулхи августăн 20-мĕшĕнчи çапăçура вилнĕ. Мускав облаçĕнчи Метяново ялĕнче пытарнă.

Афанасьев Федот Афанасьевич, 1915 ç. ç.. Аслă сержант. 1945 çулхи мартăн 28-мĕшĕнчи çапăçура вилнĕ. Гданьск (Данциг) хулинче (Польша) пытарнă.

Батраков Петр Родионович, 1898 ç. ç.. Рядовой. 1942 çулхи июньте хыпарсăр çухалнă.

Ванифатьев Яков Ванифатьевич, 1905 ç. ç.. Рядовой. 1943 çулхи сентябрĕн 13-мĕшĕнчи çапăçура вилнĕ. Смоленск облаçĕнчи Духовщински районĕнчи Отря ялĕнчи тăванла масарта пытарнă.

Васильев Алексей Васильевич, 1921 ç. ç.. Рядовой. 1941 çулхи июльте хыпарсăр çухалнă.

Васильев Федор Васильевич, 1898 ç. ç.. Сержант. Смоленск облаçĕнче 1943 çулхи май уйăхĕнчи çапăçура вилнĕ. Ăçта пытарни туллин паллă мар.

Гаврилов Федосий Гаврилович, 1918 ç. ç.. Сержант. 1941 çулхи сентябрьте Гродно облаçĕнче çухалнă.

Григорьев Василий Григорьевич, 1907 ç. ç.. Сержант. Смоленск облаçĕнче 1942 çулхи май уйăхĕнче вилнĕ. Ăçта пытарни туллин паллă мар.

Григорьев Николай Григорьевич, 1919 ç. ç.. Аслă сержант. 1941 çулхи ноябрьте Гродно хули çывăхĕнче хыпарсăр çухалнă.

Данилов Матвей Данилович, 1905 ç. ç.. Рядовой. 1945 çулхи март уйăхĕнче хыпарсăр çухалнă.

Егоров Андрей Егорович, 1916 ç. ç.. Сержант. 1942 çулхи мартăн 17-мĕшĕнче Смоленск облаçĕнчи çапăçура вилнĕ. Ăçта пытарни туллин паллă мар.

Егоров Иван Егорович, 1911 ç. ç.. Рядовой. 1941 çулхи декабрьте хыпарсăр çухалнă.

Емельянов Алексей Емельянович, 1916 ç. ç.. Рядовой. 1942 çулхи августăн 15-мĕшĕнче Боярниково ялĕ патĕнче хыпарсăр çухалнă. Хăш облаçри паллă мар.

Емельянов Игнатий Емельянович, 1906 ç. ç.. Рядовой. Сурансене пула 1943 çулхи сентябрĕн 21-мĕшĕнче вилнĕ. Смоленск облаçĕнчи Духовщински районĕнчи Клепики ялĕнче пытарнă.

Емельянов Платон Емельянович, 1914 ç. ç.. Гварди лейтенант. 1945 çулхи апрелĕн 15-мĕшĕнче хыпарсăр çухалнă.

Емельянов Роман Емельянович, 1916 ç. ç.. Кĕçĕн сержант. Сурансене пула 1942 çулхи февралĕн 22-мĕшĕнче вилнĕ. Ленинград облаçĕнчи Ломоносов хули çывăхĕнчи Красная Слобода ялĕнче пытарнă.

Ермолаев Иван Ермолаевич, 1908 ç. ç.. Рядовой. 1942 çулта хыпарсăр çухалнă.

Ермолаев Илья Ермолаевич, 1914 ç. ç.. Рядовой. 1941 çулхи сентябрьте хыпарсăр çухалнă.

Ефимов Николай Ефимович, 1914 ç. ç.. Рядовой. 1945 çулта хыпарсăр çухалнă.

Ефремов Василий Ефремович, 1924 ç. ç.. Старшина. 1943 çулта хыпарсăр çухалнă.

Захаров Андрей Захарович, 1904 ç. ç.. Рядовой. 1943 çулхи октябрьте хыпарсăр çухалнă.

Иванов Александр Григорьевич, 1913 ç. ç.. Çара Канаш районĕн çар комиссариачĕ урлă кайнă. Сержант. 1942 çулхи декабрьте хыпарсăр çухалнă.

Иванов Василий Иванович, 1908 ç. ç.. Рядовой. 1943 çулхи сентябрьте хыпарсăр çухалнă.

Иванов Иван Иванович, 1925 ç. ç.. Рядовой. 1944 çулхи июлĕн 23-мĕшĕнче Литвари çапăçура вилнĕ. Ăçта пытарни туллин паллă мар.

Иванов Николай Иванович, 1900 ç. ç.. Рядовой. 1943 çулхи январĕн 21-мĕшĕнчи çапăçура вилнĕ. Волгоград (Сталинград) облаçĕнчи Городищенски районĕнчи Песковатка салинче пытарнă.

Иванов Петр Иванович, 1911 ç. ç.. Çара Çĕрпӳ районĕн çар комиссариачĕ урлă кайнă. Рядовой. 1941 çулта хыпарсăр çухалнă.

Игнатьев Александр Игнатьевич, 1908 ç. ç.. Сержант. 1942 çулхи октябрĕн 9-мĕшĕнче хыпарсăр çухалнă.

Игнатьев Никандр Игнатьевич, 1908 ç. ç.. Сержант. Çар çыннисене тыткăна илнĕ нимĕçсен лагерĕнче 1943 çулхи февралĕн 2-мĕшĕнче вилнĕ. Минск хули çывăхĕнче пытарнă.

Ильин Николай Ильич, 1920 ç. ç.. Кĕçĕн сержант. 1944 çулхи апрелĕн 10-мĕшĕнчи çапăçура вилнĕ. Витебск облаçĕнчи Лиозненски районĕнчи Добрино ялĕнче пытарнă, унтан вил тăприне Крынки ялне куçарнă.

Краснов Василий Андреевич, 1912 ç. ç.. Рядовой. 1943 çулхи ноябрĕн 17-мĕшĕнчи çапăçура вилнĕ. Витебск облаçĕнчи Дубровенски районĕнчи Петрики ялĕнче пытарнă.

Лазарев Петр Лазаревич, 1921 ç. ç.. Рядовой. 1943 çулхи сентябрьте хыпарсăр çухалнă.

Леонтьев Федот Леонтьевич, 1917 ç. ç.. Рядовой. 1942 çулхи март уйăхĕнче хыпарсăр çухалнă.

Лукьянов Георгий Лукьянович, 1903 ç. ç.. Сержант. 1942 çулхи октябрь уйăхĕнче хыпарсăр çухалнă.

Лукьянов Митрофан Лукьянович, 1898 ç. ç.. 1941 çулхи сентябрĕн 9-мĕшĕнче Мурманск облаçĕнчи Кольски районĕнче хыпарсăр çухалнă.

Макаров Евграф Макарович, 1908 ç. ç.. Рядовой. 1943 çулта хыпарсăр çухалнă.

Марков Григорий Маркович, 1908 ç. ç.. Рядовой. 1943 çулхи октябрĕн 11-мĕшĕнчи çапăçура вилнĕ. Киев облаçĕнчи Вышгородски районĕнчи Козаровичи салинче пытарнă.

Михайлов Александр Михайлович, 1904 ç. ç.. Рядовой. 1942 çулхи декабрьте хыпарсăр çухалнă.

Михайлов Григорий Михайлович, 1925 ç. ç.. Çара Шупашкар хула çар комиссариачĕ урлă кайнă. Рядовой. 1943 çулхи июньте хыпарсăр çухалнă.

Никитин Гаврил Никитич, 1903 ç. ç.. Рядовой. 1942 çулхи сентябрьте хыпарсăр çухалнă.

Никитин Павел Никитич, 1915 ç. ç.. Рядовой. 1942 çулхи майăн 8-мĕшĕнчи çапăçура вилнĕ. Новгород облаçĕнчи Старорусски районĕнчи Сычево ялĕнче пытарнă.

Никитин Семен Никитич, 1921 ç. ç.. Рядовой. 1941 çулхи декабрьте хыпарсăр çухалнă.

Осипов Николай Осипович, 1924 ç. ç.. Рядовой. Сурансене пула 1942 çулхи ноябрĕн 11-мĕшĕнче ЭГ-2309-та вилнĕ. Вологда облаçĕнчи Молочное поселокĕнче пытарнă.

Осипов Петр Осипович, 1910 ç. ç.. Рядовой. 1941 çулхи октябрьте хыпарсăр çухалнă.

Павлов Алексей Павлович, 1906 ç. ç.. Рядовой. 1942 çулхи августăн 22-мĕшĕнче Орел облаçĕнчи çапăçура вилнĕ. Ăçта пытарни туллин паллă мар.

Павлов Афанасий Павлович, 1924 ç. ç.. Лейтенант. 1944 çулхи февралĕн 2-мĕшĕнчи çапăçура вилнĕ. Витебск облаçĕнчи Витебск районĕнчи Волково ялĕнче пытарнă.

Павлов Константин Павлович, 1924 ç. ç.. Рядовой. 1943 çулхи февралĕн 21-мĕшĕнчи çапăçура вилнĕ. Ленинград облаçĕнчи Колпино хулинче пытарнă.

Петров Владимир Петрович, 1924 ç. ç.. Сержант. 1943 çулхи май уйăхĕнче хыпарсăр çухалнă.

Петров Геннадий Петрович, 1925 ç. ç.. Çара Çĕрпӳ районĕн çар комиссариачĕ урлă кайнă. Рядовой. 1945 çулта хыпарсăр çухалнă.

Семенов Никита Семенович, 1924 ç. ç.. Рядовой. 1942 çулхи майăн 1-мĕшĕнче хыпарсăр çухалнă.

Семенов Петр Семенович, 1914 ç. ç.. Рядовой. 1942 çулхи декабрĕн 20-мĕшĕнчи çапăçура вилнĕ. Ăçта пытарни паллă мар.

Сергеев Роман Сергеевич, 1903 ç. ç.. Лейтенант. 1942 çулта хыпарсăр çухалнă.

Слабов Алексей Андреевич, 1902 ç. ç.. Рядовой. 1942 çулхи декабрьте хыпарсăр çухалнă.

Слабов Иван Андреевич, 1907 ç. ç.. Рядовой. 1941 çулхи декабрьте хыпарсăр çухалнă.

Тарасов Михаил Тарасович, 1906 ç. ç.. Рядовой. 1941 çулхи ноябрьте хыпарсăр çухалнă.

Трифонов Вячеслав Трифонович, 1914 ç. ç.. Рядовой. 1942 çулхи мартăн 8-мĕшĕнчи çапăçура вилнĕ. Смоленск облаçĕнчи Гагарински районĕнчи Сорокино тата Рыльково ялĕсем хушшине пытарнă.

Фадеев Яков Фадеевич, 1905 ç. ç.. Рядовой. 1944 çулта хыпарсăр çухалнă.

Федоров Данил Федорович, 1904 ç. ç.. Çара Çĕрпӳ районĕн çар комиссариачĕ урлă кайнă. Рядовой. 1942 çулхи июльте хыпарсăр çухалнă.

Федоров Егор Федорович, 1915 ç. ç.. Рядовой. 1941 çулхи сентябрьте хыпарсăр çухалнă.

Филиппов Николай Филиппович, 1919 ç. ç.. Рядовой. 1942 çулхи январĕн 14-мĕшĕнчи çапăçура вилнĕ. Тверь (Калинин) облаçĕнчи Андреапольски районĕнчи Величково ялĕнче пытарнă.

Фомин Владимир Фомич, 1917 ç. ç.. Рядовой. 1944 çулхи январĕн 7-мĕшĕнчи çапăçура вилнĕ. Ленинград облаçĕнчи Всеволожск районĕнчи Черная Речка юхан шыв вăрринче пытарнă.

Яковлев Иван Яковлевич, 1902 ç. ç.. Рядовой. 1941 çулхи сентябрьте хыпарсăр çухалнă.

Яковлев Петр Яковлевич, 1904 ç. ç.. Рядовой. 1942 çулхи августăн 14-мĕшĕнчи çапăçура вилнĕ. Смоленск облаçĕнчи Гагарин районĕнчи Носовые ялĕнче пытарнă.

**Хушса çырни.** Ку ентешсем пурте чăвашсем пулнă. Вĕсене çара Красноармейски районĕнчи çар комиссариачĕ урлă илнĕ (урăх çĕртен илнисене уйрăммăн палăртса хăвартăмăр). Икĕ ялтан пурĕ 136-ăн тăван килĕсене таврăнайман. Çырăвĕсем килме пăрахнă, хăшĕ-пĕри пирки нимĕнле хыпар-хăнар та пулман. Вĕсене çапах та ашшĕ-амăшĕ, мăшăрĕсем е савнă хĕрĕсем тем пекех кĕтнĕ, пурпĕр кĕтсе илеймен. Çывăх çыннисемпе тăванĕсем мĕн чухлĕ куççуль юхтарман пуль. Çапла, мĕн чухлĕ хĕн-хур, терт-нуша илсе килчĕ иртнĕ хаяр вăрçă

пирĕн çĕр çине! Анчах та паттăрсен пархатарлă ячĕ нихăçан та манăçмĕ, ĕмĕр-ĕмĕр пирĕн чĕресенче упранĕ!

## 3. Паттăрлăхĕ чун-чĕресенче упранать

Район ертӳлĕхĕ хăй вăхăтĕнче парнеленĕ «Астăвăм» кĕнекен 4-мĕш томне (2006) типтерлĕн упратăп. Вăхăтран вăхăта алла илсе, чылайччен пăхса ларатăп. Унта вăрçăран Çĕнтерӳпе таврăннисен хушамачĕсемпе ячĕсене тата ашшĕ ячĕсене кĕртнĕ. Акă, Еншик Чуллă ял тăрăхĕнчен фронтра пулнисен тĕлĕнче чарăнатăп. Уйрăмах хам çуралнă Пысăк Чуллă ялĕнчен тухнисем çывăх.

Вĕсем халĕ пĕри те çук ĕнтĕ. Эпĕ чылайăшне пĕлнĕ-курнă. Акă, сăмахран, Маркел Антонович Антонова, Трифон Васильевич Васильева, Николай Георгиевич Георгиева, Андрей Данилович Данилова, Игнатий Дмитриевич Дмитриева, Данил Емельянович Емельянова, Гурий Ефремович Ефремова, Дмитрий Аркадьевич Ефремова тата ыттисене. Вăрçă вутĕнче паттăрлăхпа палăрнăскерсем, каярахпа мирлĕ ĕçре тар тăкнă. Аристарх Яковлевич Яковлев, калăпăр, чылай çул бригадир пулчĕ. Фронтра илнĕ наградăсем çумне Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ хушăнчĕ унăн. Манăн пысăк атте, Вячеслав Степанович Степанов, 1915 çулта çуралнăскер, вăрçăра аслă лейтенант, взвод командирĕ пулнă, шкулта ĕçлерĕ, 1990 çулта çĕре кĕчĕ. Пысăк аннепе – Зоя Андреевна Степановапа (вăл та вăрçăра çапăçнă, пурнăçран 2016 çулхи çу кунĕсенче уйрăлчĕ) - ывăлпа хĕр ӳстернĕ, ывăлĕ – Виталий Вячеславович - полковника çитнĕ.



*Сăнӳкерчĕкре: кукаç - Василий Яковлевич Яковлев – вăрçă хыççăнхи çулсенче.*

Ку списокрах маншăн çывăх тата икĕ ят та пур. Пĕри – кукаçи - Василий Яковлевич Яковлев, 1898 çулта çуралнăскер, стрелоксен полкĕнче çапăçнă. Унăн асаилĕвне иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсен пуçламăшĕнче çырса илнĕччĕ. «Пуласлăх - çĕннинче» теме юрататчĕ.

Эпĕ çарта чухне, 1978 çулта, куçне хупнă вăл. Тепри – кукку - Алексей Васильевич Васильев (1921-1966). Рядовой, минометчик, 379 стрелковăй полк пулеметчикĕ пулнă. Еншик Чуллăри вăтам шкулта тимленĕ, ĕç урокĕсене ирттернĕ.

Пирĕнпе кӳршĕри Георгий Иванович Иванова (1908-1966) лайăх астăватăп, аттен амăшĕпе пĕр çулхискер, ефрейтор пулса çапăçнă. Вăрçă суранĕсем унăн пурнăçне самаях кĕскетнĕ.

Паллана-пĕлнĕ çынсем... Христофор Иванович Иванов рядовой, Алексей Капитонович Капитонов рядовой, Василий Константинович Константинов кĕçĕн сержант, отделени командирĕ, Анатолий Лазаревич Лазарев сержант, Аркадий Павлович Павлов кĕçĕн сержант, отделени командирĕ, Иван Федорович Федоров, Геннадий



Национальная библиотека Чувашской Республики
И-49258

Яковлевич Яковлев кĕçĕн сержант, Сергей Алексеевич Ярков рядовой... Хăшĕ-пĕрин пирки хăй вăхăтĕнче район хаçатĕнче те корресподенцисем пичетлерĕм. Хавхаланса çыраттăм. Пирĕн хушăра çук халĕ вĕсем. Анчах паттăрлăхĕ пурпĕр пирĕн чун-чĕресенче упранать. Ĕмĕрлĕхех!

## 4. Ĕçлеме кăна мар, савăнма та пĕлеççĕ

Юлашки вăхăтра ялсем кăна мар, урамсем те хăйсен уявĕсене йĕркелесе ирттерме пуçларĕç. Акă, çак кунсенче çеç Еншик Чуллă ялĕнчи пысăках мар Маркел тата Парковая урамсенче пурнăкансемпе вĕсенчен тухнисем пĕрле пуçтарăнчĕç.

**Кĕске справка.** Маркел урамĕн ятне кунта пурăннă М. Антонов паллă строителе сума суса панă. Хăй вăхăтĕнче вăл «Прогресс» колхозри 1-мĕш бригадăри строительсен бригадине нумай çул ăнăçлă ертсе пычĕ. Маркел Антоновичпа унăн ĕçтешĕсем (сăмах май, манăн атте – Михаил Данилович та, урам урлă пурăннă Валерий Степанович та, кӳршĕри кум – Семен Григорьевич та çак бригадăрах вăй хунă) мĕнле кăна объект çĕклемен-ши? Тепĕр чухне вĕсем канмалли кунсемсĕрех тимленине эпĕ паянхи евĕрех астăватăп. Сăмах май, тăрăшулăхшăн Маркел Антоновича 1986 çулхи августăн 29-мĕшĕнчи Указпа «Ĕçре палăрнăшăн» медальпе наградăланă. Çавăн пек маттур çын ятне кунта пурăнакансем урам ятне парса пулас ăрусем валли упраса хăварас тенĕ. Халĕ çак урамри уйрăм 16 хуçалăхра 31 çын пурăнать. Парковая урамри 12 килте вара (вĕсенчен те хăшĕ-пĕри хĕл кунĕсенче хупăнать, çу кунĕсенче каллех «чĕрĕлет») 23-ĕн

кун кунлаççĕ. Çулĕсемпе чи асли – Маркел урамĕнчи А.Яковлева. Анастасия Яковлевна 1933 çулхи августăн 22-мĕшĕнче çуралнă. Чи çамрăкки вара Парковая урамри Иринăпа Валерий Васильевсен ывăлĕ – Радмир – вăл çĕр çине пĕр уйăх каялла кăна килнĕ-ха. Ятлă-сумлă çынсем чăннипех те чылайăн ку урамсенче. Акă, Григорьевсенех илер. Христина Павловна – шут ăсти. Василий Петрович зоотехникра тĕрлĕ çĕрте тата чун-чĕрепе тимленĕ. Иртнĕ ĕмĕрĕн 60-70-мĕш çулĕсенче Аслă Чуллă ялĕн çыннисем хăмла çитĕнтерессипе районта та, республикăра та малтисен йышĕнче пулнă. А. Данилов бригадир куншăн 1966 çулта «Хисеп палли» ордена та тивĕçнĕ. «Турчка» (çак ĕç хатĕрĕ евĕр пулнăран ку урама çынсем çапла калаççĕ) урамĕнчи А. Иванова, Р. Васильева, Л. Павлова, Л. Васильева, Е. Осипова, А. Павлов, В. Никитин «симĕс ылтăн» туса илес ĕçе сумлă тӳпе хывнă.

Тăван çĕршывăн 1941-1945 çулсенчи Аслă вăрçине, Афганистанри çапăçусене хутшăннисем те пур.

Акă, А. Павлов, 20-ри взвод командирĕ, çамрăк лейтенант 1944 çулхи февралĕн 2-мĕшĕнче Витебск хули çывăхĕнчи хаяр çапăçусенчен пĕринче пуçне хунă. 1943 çулхи октябрĕн 18-мĕшĕнче Афанасий Павловича Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăланă пулнă. Илеймен ăна паттăр. Вăл 47 çул иртсен çеç салтакăн тăван килне çитнĕ. Кун пирки «Хыпар» хаçатра А. Смолин поэт «Поэзин сӳнми çăлтăрĕ» статьяра çырса кăтартнă, А. Павловăн «Аса илӳсем» сăввине те пичетленĕ. Афанасий Павловичăн аппăшĕсем – Миропия тата Наталия Павловнасем – ял хуçалăх производствинче ырми-канми вăй хунă. Г. Георгиева, М. Павлова, А. Васильев, Г. Васильева тата ыттисем строительствăра тимленĕ. (Сăмах май, уявра ку

урам çыннисен иртнĕ тата хальхи пурнăçне сăнлакан сăнÿкерчĕксен стенчĕсемпе те паллашма май пулчĕ).

Маркел тата Парковая урамсенче пурăнакансем праçнике ниме мелĕпе хатĕрленнине те палăртма кăмăллă: тирпей-йĕрке тунă, укçа-тенкĕ пухнă, камăн ку енĕпе мĕн тумаллине палăртнă.

Уявĕ икĕ урам хĕресленнĕ çĕрти илемлĕ вырăнта иртрĕ (тÿрех каламалла: вăйлă-ă-ă!) Çакăншăн Парковая урамри И. Георгиевăн кĕрÿшĕ – Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕк ялĕнче çуралнă, халĕ Чăваш наци конгресĕн спорт комитечĕн председателĕ, Раççейри «Кĕрешÿ» федерацийĕн президенчĕ, чăваш этнокультурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ В. Васильев уйрăмах нумай вăй хунине, паллах, никам та хирĕçлеймĕ. Çавăнпах праçнике йĕркелесе пынă П. Петрова чи малтанах Виталий Петровича сăмах пачĕ.

Вăл пухăннисем патне ЧНК президенчĕн Н. Ф. Угасловăн ăшă саламне çитерчĕ. «Ертÿçĕсем килеççĕ те каяççĕ, анчах урамсем пурăнаççĕ», терĕ. Виталий Петровичпа пĕрле «Аксар» студи ертÿçи А. Иванов-Аксар та (Алексей Васильевич Аттилла полководец тумне ăсталаса тăхăннă) килнĕ. Вăл чăваш халăхĕн историйĕпе кĕскен паллаштарчĕ, авалхи йăлапа кĕлĕ ирттерчĕ.

Урамсен çыннисене Еншик Чуллă ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А. Тихонова та саламласа ыр сунчĕ, уява йĕркелекенсене тав турĕ, «ялти ытти урамсен çыннисемшĕн эсир ырă тĕслĕх пулса тăратăр», терĕ. Альбина Владимировна Христина Павловнапа Василий Петрович Григорьевсене (ветерансене), нумай ачаллă Иринăпа Валерий Васильевсен çемйине, урамсене тирпей-йĕрке тăвассипе палăрнă Ю. Николаева тата тата уявăн маттур

йĕркелӳçине В. Васильева Тав çырăвĕсемпе тата Грамотăпа чысларĕ.

Ку урамсенчен 3 педагог тухнă. Вĕсенчен пĕри – Еншик Чуллăри вăтам шкул директорĕ Т. Беззубова. Татьяна Александровна ял историйĕ çинчен кĕскен каласа пачĕ, хăй вăхăтĕнче кунта Кирук, Наçтаç, Маркки хапхисем пулнине асăнчĕ.

Пухăннисем çĕре кĕнисене асăнса пĕр минут хушши шăп тăчĕç.

Йĕркелӳ комитечĕ уява хатĕрленес çĕрте уйрăмах палăрнисене Дипломсемпе тата парнесемпе чысларĕ.

Уява Еншик Чуллăри «Энжей» фольклор ушкăнĕ (ертӳçи – ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Н. Никоноров) тата вырăнти çамрăк Е. Николаева юрăç хăйсен юррисемпе пуянлатрĕç.

Спорт ăйййисем те пулчĕç. Кĕрешӳçĕсем тупăшрĕç, «Сĕрен янă» чупура, ытти енре ватти-вĕтти те вăй виçрĕ, çĕнтерӳçĕсем медальсене тивĕçрĕç.

Уяв çĕрлеччченех пычĕ. Унта пынисене тутлă шӳрпепе, шашлăкпа, ытти апат-çимĕçпе хăналарĕç.

Юлашкинчен çакна палăртса хăварасшăн. Культура çулталăкĕнче иртекен ку евĕр уявсем пĕчĕк тăван çĕршывшăн, унăн илемĕпе çыннисемшĕн мăнаçлантармаççĕ кăна мар, юратнă тăрăха упраса пурăнма, тирпей-йĕркешĕн çине тăма, ял, урам çыннисем хушшинчи туслăха çирĕплетме чĕнеççĕ.

*«Ял пурнăçĕ» хаçат,*
*2014 çулхи августăн 1-мĕшĕ.*

## 5. Аслă Чуллăсем

## çумăра пăхмасăрах савăнчĕç

Унччен пилорама пулнă вырăнта Аслă (Пысăк) Чуллă ял уявĕ иртрĕ. Тĕллевĕ – ял йăли-йĕркине сыхласа хăварасси, пĕчĕк тăван çĕршыва юратса хисеплеме вĕрентесси, çамрăк ăрăва патриотла воспитани парасси. Ăна Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Çĕнтерӳ тунăранпа - 70, района йĕркеленĕренпе 80 çул çитнине, çавăн пекех Раççейре – Литература, Чăваш Енре К. В. Иванов çулталăкне паллă тунине халалларĕç.

### 1. Кăштах историрен

Акă мĕн çырать В. Константинов хăйĕн «Ял пурнăçĕ» хаçат çумĕнче 1995 çулхи кăрлач уйăхĕнче тухнă «Трак тăрăхĕнчи ялсем» кĕнекин 9-10-мĕш страницисенче: «Пысăк Чуллă – Аслă Чуллă – Большие Челлы. Чуллă 1719 çултах ял пулнă. Ăна ĕçмелли шыв çуккипе тата кӳршĕсемпе килĕштерсе пурăнайман пирки Чумаш ялĕнчен куçса ларнă çынсем пуçарса янă текен халап çӳрет. Пысăк Чуллăра 1859 çулта 46 кил пулнă. Унта 131 арçынпа 137 хĕрарăм пурăннă. 1907 çулта пурĕ 523 çын шутланса тăнă.

Ку тăрăхри ялсем ĕлĕк Хусан кĕпĕрнин Çĕрпӳ уесĕнчи Упи вулăсĕнче пулнă. Пысăк Чуллă вара авал Сĕве кĕпĕрнине кĕнĕ. Çĕрпӳ уесне унтан куçарнă чухне Чуллă ялне Шупашкар уесĕнчен Çĕрпĕве кĕртнĕ. Мĕншĕн тесен Чуллăпа Еншик ĕлĕк иккĕшĕ те пĕр çĕр общининче тăнă».

1974 çулта Шупашкарта пичетлесе кăларнă «Населенные пункты Чувашской АССР» словарь-справочникăн 87-мĕш страницине вуласан, Пысăк Чуллă ялĕ (ăна Аслă Чуллă та теççĕ) 1917 çултан Етĕрне, 1922 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен Çĕрпӳ уесĕсене кĕнине пĕлме пулать. Вăл Упи вулăсĕнче шутланнă. 1927 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен Çĕрпӳ, 1935 çулхи мартăн 1-мĕшĕнчен Трак, 1940 çулхи августăн 1-мĕшĕнчен Красноармейски, 1944 çулхи мартăн 6-мĕшĕнчен Чурачăк, 1959 çулхи июлĕн 14-мĕшĕнчен Красноармейски, 1962 çулхи декабрĕн 20-мĕшĕнчен Çĕрпӳ районне кĕнĕ. 1927 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнче Еншик Чуллă ялсоветĕнче шутланнă.

Ман алăра – «Астăвăм» кĕнекен 4-мĕш томĕн иккĕмĕш пайĕ тата 5-мĕш томĕ. Пĕрремĕшĕнче темиçе районти, çав шутрах Красноармейски районĕнчи те, Тăван çĕршывăн 1941-1945 çулĕсенчи Аслă вăрçинчен таврăннисен списокĕпе паллашма пулать. Пысăк Чуллă ялĕнчен (238-240-мĕш стр.) унта 67 çын кĕнĕ (шел те, паянччен пĕри те пурăнса çитереймен). «Орден – за бой, орден – за труд» корреспонденцире (239-мĕш стр.) Пысăк Чуллăра 1919 çулта çуралнă, вăрçăра пулнă, унтан таврăнсан, нумай çул «Прогресс» колхоз бригадирĕнче тăрăшнă А. Я. Яковлев пирки каласа панă. Аристарх Яковлевичăн сăнне «Красноармейски районĕ» пайри тĕрлĕ тĕспе пичетленĕ сăнӳкерчĕкре те курма пулать. Вăл 2004 çулта çĕре кĕнĕ.

Ку списокра манăн кукаç - Василий Яковлевич Яковлев (1898 – 1978) тата кукку – Алексей Васильевич Васильев (1921 – 1966) пур. Иккĕшне те лайăх астăватăп.

«Астăвăм» кĕнекен 5-мĕш томĕнче вара вăрçăра, аманнă хыççăн госпитальсенче е нимĕçсен лагерĕсенче вилнисен

списокĕ пур (296 – 298 стр.) Пысăк Чуллăран кунта 71 ят-хушамат (хăшĕ-пĕри çемьеленме те ĕлкĕреймен вĕт-ха).

Пысăк Чуллăран (вăл манăн тăван ял та) ят-сумлă çынсем сахалăн мар тухнă. Çав шутра Л. А. Абрамов учитель те. 1888 çулта çуралнă. Унпа кӳршĕре пурăннăран Лука Абрамовича лайăх астăватăп. Педагогика ĕçĕнчи ӳсĕмсемшĕн ăна Ленин орденĕпе (1950) наградăланă. М. А. Антонов строитель (1916-1995) ячĕпе, ав, ялти пĕр урам хисепленет. А. Д. Данилов хăмлаçă (1908 - 1973) ячĕ те хăй вăхăтĕнче республикипех кĕрленĕ, 1966 çулта ăна «Хисеп палли» орденпа чысланă. Çакăн пирки 2005 çулта пичетленнĕ «Красноармейский район. Люди и судьбы» кĕнекен 33-мĕш страницинче те вуласа пĕлме пулать. Çак страницăрах ялти А. Д. Дмитриев учитель пирки те кĕскен çырни пур. Кунти 37-мĕш страницăра манăн пĕрремĕш учительницăна – Т. Т. Ефремована асăнни пур. Тамара Трифоновна мăшăрĕпе – Дмитрий Ефремовичпа 11 ача çуратса ӳстернĕ, çын тунă. 1928 çулта çуралнă Э. Е. Игнатьева та педагогика ĕçĕнче палăрнă. Эльвира Ефимовна – 5-6-мĕш классенче вĕренекенсем валли çырнă «Чăваш чĕлхи» учебник авторĕ. П. К. Лаврентьева (1961 ç. ç.) – экономика ăслăлăхĕсен кандидачĕ. Унăн ашшĕ – К. С. Степанов – ялти пултаруллă çын, ученăй агроном, пиччĕшĕ – В. К. Степанов – полковник. Виталий Степановпа Юрий Степанов та – полковниксем. И. А. Канавичева – Чăвашрадио ĕçченĕ. В. С. Филиппов (1950 ç. ç. ) тĕрлĕ маркăллă тракторпа вăй хурса «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ механизаторĕ» хисеплĕ ят илнĕ. Л. А. Голубевана 2002 çулта «Раççей Федерацийĕн пĕтĕмĕшле вĕрентĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ» ят панă. А. Я. Яковлев бригадир 1973 çулта Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденне,

А. И. Иванова сысна пăхакан 1977 çулта «Ĕçри хастарлăхшăн», строительсен бригадирĕ М. А. Антонов 1986 çулта «Ĕçре палăрнăшăн» медальсене тивĕçнĕ. Ял хуçалăхĕнче ырми-канми вăй хунисен йышĕнче ялти вун-вун çынна асăнма пулать.

## 2. Çумăра пăхмасăрах савăнчĕç

Кăнтăрла çитеспе пĕрĕхме тытăннă çумăр пĕр вăйланчĕ, пĕр хăватне чакарчĕ. Уява пуçлама палăртнă вăхăт – 15 сехет – тĕлне те чарăнмарĕ вăл. Йĕркелӳçĕсем вара тепĕр çур сехетрен праçнике тытăнас, терĕç. Ара, «çут çанталăкăн усал çанталăк çук», теççĕ мар-и? Çумăра пăхмасăрах юрă-ташă ăстисем вăйă картине тăчĕç. Унтан уява Чăваш наци конгресĕн президенчĕн физкультурăпа спорт енĕпе ĕçлекен канашçи В. Васильев (сăмах май, Виталий Петрович – ку ял кĕрӳшĕ, хăй - Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕк ялĕнчен) уçрĕ.

- Иртнĕ çул ялти Маркел тата Парковая урамсен уявне ирттертĕмĕр. Ун чухне кăçал Пысăк Чуллă ял уявне йĕркелеме калаçса килĕшрĕмрĕр те. Çанталăк кăштах чăрмантарать те – мĕн тăвăн. Ял çыннисем пирĕн ĕçлеме çеç мар, канса-савăнса вăй-хал пухма та пĕлеççĕ, - терĕ вăл.

Ятарласа ăсталанă сцена çине район пуçлăхĕ В. Григорьев тата район администрацийĕн пуçлăхĕ А. Шестаков хăпарчĕç.

- Ку евĕр уявсем çынсене пĕтĕçтереççĕ. Чăваш халăхĕ ĕлĕк-авалах нимелле ĕçленĕ, пĕрлех савăннă та, - терĕ Владимир Николаевич.

Андрей Владимирович та, Пысӑк Чуллӑсене пур кӑмӑлтан саламланӑ май, пӗр пулнине, пӗрле ӗҫленине тата савӑннине нимӗн те ҫитменнине палӑртрӗ.

Унтан Раҫҫей Федерацийӗн, Чӑваш Республикин тата Красноармейски районӗн Гимнӗсем янӑрарӗҫ.

Малалла Еншик Чуллӑ ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхне А. Тихонована сӑмах пачӗҫ. Альбина Владимировна малашне ку вырӑнта спорт площадки пуласса шантарчӗ, ял праҫникне хатӗрленсе ирттерес ӗҫре пуҫарулӑх кӑтартнисене Тав ҫырӑвӗсемпе чысларӗ.

Уявра кунпа пӗрлех Еншик Чуллӑри вӑтам шкул директорӗ, район Пухӑвӗн депутачӗ Т. Беззубова, ку ял тӑрӑхне кӗрекен Шурка ялӗнче ҫуралнӑ, республикӑри почта ҫыхӑнӑвӗн управленийӗн ертӳҫинче вӑй хунӑ, кӑҫалхи Акатуйра «Красноармейски районӗн хисеплӗ гражданинӗ» ята тивӗҫнӗ С. Тимофеева, Шупашкарти «Трак ен» ентешлӗх ертӳҫи А. Львов (Алексей Николаевич ял ҫамрӑкӗсене волейболпа футбол мечӗкӗсем парнелерӗ), Чӑвашрадиора вӑй хуракан И. Канавичева редактор (Ираида Александровна, сӑмах май, ку ял ҫӗрӗ ҫинче выляса ӳснӗ) салам сӑмахӗсем каларӗҫ.

Район администрацийӗн пуҫлӑхӗ А. Шестаков чи маттуррисемпе пултаруллисен пӗр ушкӑнне, ҫав шутра ял старостине А. Григорьевана та (сӑмах май, Анфиса Алексеевна ҫемйипех уява хатӗрленме сумлӑ тӳпе хывнӑ) Тав ҫырӑвӗсемпе чысларӗ, малашне те ӳсӗмсем сунчӗ.




*А. Шестаков ял старостипе А. Григорьевапа пӗрле*

Сцена çинче вара вырӑнти «Энжей» ансамбльсӗр пуçне (ертӳçи – ЧР культурин тава тивӗçлӗ ӗçченӗ Н. Никоноров) Чатукассинчи пултарулӑх ушкӑнӗ (ертӳçи – Еншик Чуллӑ ял тӑрӑхне кӗрекен Пӗрремӗш Çӗньялта çуралнӑ В. Николаева, Аслӑ Чуллӑ ял старостин А. Григорьеван йӑмӑкӗ), Еншик Чуллӑ вӑтам шкулӗн 6-мӗш класне куçнӑ Никита Никитин, Е. Порфирьева (вӑлах уява йӗркелесе пычӗ) тата ыттисем юрлани, çамрӑк ташӑçӑсем ташлани куракансен кӑмӑлне кайрӗç.

Ял çыннисем спортпа та туслӑ. Авӑ, кунти пӗртӑван Батраковсем кӑçалхипе 10-мӗш хут волейбол турнирне йӗркелерӗç. Черновсем те хӑйсен парнисене çӗнсе илессишӗн ятарлӑ турнир ирттереççӗ. ЧНК-н спорт комитечӗн председателӗ, Раççейри «Кӗрешӳ» федерацийӗн президенчӗ, чӑваш этнокультурин тава

тивĕçлĕ ĕçченĕ В. Васильев çине тăнипе (А. Шестаков Виталий Петровича район администрацийĕн Тав çырăвĕпе чысларĕ) ку хутĕнче те волейболпа футбол ăмăртăвĕсем, ытти вăйăсем иртрĕç.

Ал ĕç ăстисем те чылайăн пирĕн ялта. Акă, сăмахран, Еншик Чуллăри вăтам шкул учителĕ П. Евграфов тата унăн вĕренекенĕсем курава йывăçран касса кăларнă япаласем тăратнă. Наталия Григорьева, Светлана Яковлева, Ольга Григорьева, Светлана Михайлова, Валентина Васильева çыхнă-тĕрленĕ ĕçсемпе те паллашма май пулчĕ. «Вот моя деревня, вот мой край» фотостенд ялти илемлĕ вырăнсене сăнларĕ. Пĕртăван Батраковсен турнирĕсем пирки каласа паракан фотостенд умĕнче те нумайăшĕ чарăнса тăчĕ.

Ялти хисеплĕ ватăсенчен пĕринчен – Анастасия Яковлевна Яковлеваран (вăл 1933 çулхи августăн 22-мĕшĕнче çуралнă) уяв пирки хăйĕн шухăш-кăмăлне пĕлтерме ыйтрăм.

- Питĕ килĕшрĕ. Пĕр пулсан, темĕн те тума пултаратпăр иккен. Мĕн чухлĕ çамрăк пухăнчĕ, авă. Ялăн малашлăхĕ пурах апла. Вăл ӳссе-тĕреклене (çĕнĕ пӳрт-хуралтă хăпартакансем тупăнсах тăраççĕ) пырасса эпĕ те шанса тăратăп, - тулли кăмăлпа пĕлтерчĕ ĕç ветеранĕ.

Кун çумне урăх нимех те хушса калаймăн. «Çитес ял уявĕччен, Пысăк Чуллăсем!» темелли кăна юлать.

### 3. Манăн шухăш

Çапла, кашни ялăн хăйĕн историйĕ, пултаруллă та хастар çыннисем, ку чухнехи хĕрӳ ĕç кĕввиллĕ кунĕсем. Мĕнпе сывлать-ха, пурăнать-ха тăван ял? Унăн пурнăçĕпе

çыннисем çинчен районти «Ял пурнăçĕ» хаçатра çине-çинех çырса кăтартатпăр. Пысăк Чуллă ӳсĕм-çитĕнĕвĕсемпе савăнатăп.

Халĕ чылай ял хăйĕн çуралнă кунне палăртма вăй çитерчĕ. Ку таранччен Аслă Чуллă ял уявне йĕркелесе ирттермен-ха. Халĕ, ав, тахçанхи ĕмĕт пурнăçа кĕчĕ. Пултартăмăр вĕт! Тепĕр тесен, ыттисенчен мĕнрен кая!

Çуралнă тăван кĕтес кун-çулне пирĕнтен кашнин пĕлмеллех. Хамăрăн асатте-асаннесен, атте-аннесен пархатарлă та ырă йăли-йĕркине малалла аталантарса пымалла, çитĕнекен çамрăк ăрăва вĕрентмелле. Вĕсем те тăван яла манăçа ан кăларччăр, ăна пуянлатса çĕнетме вăй хуччăр.

*Районти «Ял пурнăçĕ» хаçат,*
*2015 çулхи августăн 7-мĕшĕ.*

## 6. Тăван ял историне хамăр çыратпăр

В. Константинов таврапĕлӳçĕ хăйĕн «Трак тăрăхĕнчи ялсем» (кăрлач, 1995) кĕнекинче Еншик ялĕ пирки çапла çырать: «Тĕне кĕмен Еншик пуçарса янă. Çак ял патĕнчи чи таса çăлкуçне Еншей теççĕ. 1859 çулхи перепиçре 57 килте 146 арçынпа 157 хĕрарăм пурăннă. 1989 çулта 720 çын шутланнă, 332-шĕ – арçын. Халĕ 169 çемьере 744 çын пурăнать».

Еншик Чуллă ял тăрăхĕ тăратнă ĕçлĕ хутсем тăрăх, иртнĕ çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне Еншик Чуллăра ялан усă куракан хуçалăхсем – 205, вĕсенче 508 çын пурăннă, дача евĕр усă куракан хуçалăхсем – 139.

«Населенные пункты Чувашской АССР» кĕнекере (ку словарь-справочник 1974 çулта Шупашкарта тухнă) Еншик

ялĕ 1917 çултан Етĕрне уесĕн Упи вулăсне, 1922 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен Çĕрпӳ вулăсне, 1927 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен Çĕрпӳ, 1935 çулхи мартăн 1-мĕшĕнчен Трак, 1944 çулхи мартăн 6-мĕшĕнчен Чурачăк, 1959 çулхи июлĕн 14-мĕшĕнчен Красноармейски, 1962 çулхи декабрĕн 20-мĕшĕнчен Çĕрпӳ районне кĕнĕ. Халĕ ку ял, пĕлетпĕр, Красноармейски районне кĕрет. 1964 çулхи апрелĕн 24-мĕшĕнчен çак ял Еншик Чуллă ялсовет (халĕ – ял тăрăхĕ) тытăмĕнче. «Астăвăм» кĕнекен 5-мĕш томĕнче (1999) Еншик Чуллă ялĕпе (294-296 стр.) иртнĕ вăрçăран 55 çын таврăнайманнине вуласа пĕлме пулать. Çак кĕнекен 4-мĕш томĕн иккĕмĕш пайĕ (2006) çирĕплетнĕ тăрăх, ку ялпа фронтран 60-ăн килĕсене килнĕ. Шел те, паян вĕсенчен пĕри те пурăнмасть.

Пĕлтĕр «Аслă Чуллăсем çумăра пăхмасăрах савăнчĕç» фоторепортажра («Ял пурнăçĕ» хаçатăн 7. 08. 2015 çулхи 59-мĕш номерĕ) ку ялти паллă çынсен ят-хушамачĕсене асăннăччĕ эпир. Паян вара Еншикрен тухнă маттурсене аса илĕпĕр. Кам пĕлмест пулĕ Вархуш Энжейпа Ю. Петров-Вирьял сăвăçсене?! А. Васильев – истори ăслăлăхĕсен кандидачĕ. К. Захаров – сăрт-ту мастерĕ, Донецк облаçĕнчи пĕр шахтăра участок начальникĕ пулнă, III тата II степень Ĕç Мухтавĕн орденĕсене тивĕçнĕ. В. Константинов учителĕн – 3 медаль. Г. Лаврентьев ракетăпа космос комплексĕнче вăй хунă, каярахпа – Мускав облаçĕнчи Королев хулин пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ. Е. Леонидовăн Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ, «Ĕçре палăрнăшăн», ытти медальсем пур. Владимирпа Александр Мироновсем – пушар хуралĕн ят-сумлă ĕçченĕсем. Ф. Миронов учитель – Тăван çĕршывăн Аслă

вăрçин участникĕ, халăха çутта кăларас ĕç отличникĕ. В. Николаев (Лерий Еншик) «Коммунизм ялавĕ» хаçатпа «Капкăн» журналта тимленĕ, С. Элкер ячĕллĕ преми лауреачĕ. П. Павлова доярка «Хисеп палли» орден илнĕ. В. Серафимов машинист-бульдозерист – РФ тава тивĕçлĕ мелиораторĕ, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе икĕ хутчен наградăланă, вăл 1985-1990 çулсенче ЧАССР Аслă Канашĕн депутачĕ пулнă. А. Смирнов водителĕн ĕçне çĕршыв Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе хакланă. В. Яковлев – РФ Аслă сучĕн членĕ. Н. Яковлев – шалти служба полковникĕ. Ку списока татах та тăсма пулать. Çапла вĕсем Еншиксем!

Еншик Чуллăсем уява тĕплĕн хатĕрленнĕ: пилорама пулнă вырăнти стадиона йĕркене кĕртнĕ, çывăхри кивĕ сарая пăснă. Праçник кунĕнче П. Евграфов вĕрентекен, О. Григорьевапа Н. Григорьева ĕçĕсенчен, Л. Назарова ӳкерчĕкĕсенчен йĕркеленĕ курав ĕçлерĕ. Еншикри Павловсен çемйи вара унта тăварланă кăмпа, компот, тĕрлĕ салатсем тăратнă.



*Еншик Чуллăн ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А. Тихонова Л. Назаровна чыслать.*

15 сехет иртсен вырӑнти тата район центрӗнчи юрӑҫсем вӑйӑ картине тӑчӗҫ. Уява йӗркелесе пыракан – 2009 ҫулта Еншик Чуллӑри вӑтам шкултан вӗренсе тухнӑ Роза Тихонова ял ҫыннисене сцена ҫывӑхнерех пыма йыхравларӗ. Пурте пӗрле «Асран кайми аки-сухи» юрра юрларӗҫ.

Еншик Чуллӑ ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗ А. Тихонова праҫнике ӑшӑ та ырӑ сӑмахсемпе уҫрӗ.

- Тӑван яла тирпей-илем кӗртсе хастар ӗҫпе, ырӑ пурнӑҫпа пурӑнатпӑр. Савнӑ тӑрӑхра урам-ял уявӗ виҫҫӗмӗш хут иртет. Икӗ ялта пӗр команда йӗркеленни питех те савӑнтарать, - пӗлтерчӗ Альбина Владимировна.

Раҫҫей тата Чӑваш Республикисен Гимнӗсем янӑранӑ хыҫҫӑн вӑл Ҫурткассинчи Евдокимовсен, Еншикри Павловсен, Аслӑ Чуллӑри Степановсен ҫемйисене, ҫавӑн пекех С. Георгиева, Л. Назарована, В. Филиппова Тав ҫырӑвӗсемпе чысларӗ, Еншик Чуллӑри кану центрӗ ҫумӗнчи «Энжей» фольклор ушкӑнӗ маттуррисемпе пултаруллисене «Урамӗсем анлӑ, утма лайӑх» юрӑ парнелерӗ.

Район администрацийӗн пуҫлӑхне С. Молоткова сӑмах параҫҫӗ.

- Ку евӗр уявсем кирлех. Пӗрле пуҫтарӑнса шӑкӑл-шӑкӑл калаҫни, темиҫе ҫул пӗр-пӗрне курмасӑр пурӑннӑ хыҫҫӑн курнӑҫса сӑмахлани хӑйех мӗне тӑрать, - терӗ Сергей Львович. - Ҫак кунсенче ҫеҫ-ха Чӑваш Ен Пуҫлӑхӗ М. Игнатьев хутшӑннипе ҫур ҫул кӑтартӑвӗсене пӗтӗмлетрӗмӗр, малашлӑх тӗллевӗсене палӑртрӑмӑр. Урамсенчи ҫулсене тӑвассипе малалла ӗҫлемелле. Республика Правительстви пулӑшнипе кӑҫал 5 ҫул хута каять. Ҫитес ҫул тата иккӗ пулмалла.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ те уява пушă алăпа килмен. Вăл та хастарсен пĕр йышне Тав çырăвĕсем пачĕ, вĕсен шутĕнче Т. Беззубова, В. Чернов, Н. Никитина, С. Иванов, Ю. Дмитриев, П. Васильева, В. Филиппов, А. Филиппова, Ф. Семенова, К. Семенов пулчĕç. Г. Дмитриева, Т. Иванова, О. Тихонов, А. Григорьева тата А. Захарова вара ЧР муниципаллă йĕркелӳсен канашĕн Грамотисене тивĕçрĕç. 45 тата 50 çул пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнакан çемьесене те чысларĕç уявра. Вĕсем – Георгий Сергеевичпа Нина Макаровна Ивановсем, Григорий Григорьевичпа Римма Павловна Григорьевсем, Юрий Петровичпа Валентина Васильевна Никитинсем тата Алексей Владимировичпа Антонина Петровна Никитинсем.

Уява пуçтарăннисене çавăн пекех Аслă Чуллă ялĕн кĕрӳшĕ – Чăваш наци конгресĕн спорт комитечĕн председателĕ, хастар та маттур Чăваш халăх ăсчахĕ В. Васильев (Виталий Петрович спортăн тĕрлĕ енĕсенче çĕнтернĕ А. Никитина, Д. Васильева, Н. Иванована, А. Павлована, Л. Васильевана ырларĕ. Сăмах май, спорт ăмăртăвĕсем татах та пулчĕç праçникре. Яш-кĕрĕм волейболла, футболла вылярĕ. Красноармейскинчи ДЮСШ-ри П. Яковлевпа А. Тимофеев тренерсен вĕренекенĕсем бокс енĕпе кăтартуллă вăйăсем ирттерчĕç), Аслă Чуллăри С. Георгиев усламçă, Еншик Чуллă вăтам шкул директорĕ Т. Беззубова (Татьяна Александровна ял историйĕпе паллаштарчĕ, унăн ĕçре палăрса мухтава тивĕçнĕ çыннисем çинчен каласа пачĕ) саламларĕç.

Вилнисене асăнса пĕр минут шăп тăчĕç Еншик Чуллăсем.

Уяв чылая пычĕ. Унăн илемне «Трак ен» халăх фольклор ушкăнĕ (ертӳçисенчен пĕри – ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Н. Никоноров), районти Культура çурчĕ çумĕнчи «Хавал», Еншик Чуллăри «Энжей» ушкăнсем пуянлатрĕç.

Уявра эпĕ те чылай ентешпе курса чун килениччен калаçрăм. Вĕсен шутĕнче хама вĕрентнĕ 91 çулхи С. Илларионова педагог, район администрацийĕнче пĕрле ĕçленĕ В. Дмитриев (Еншик), кӳршĕсем – Л. Ивановпа Г. Григорьев, Г. Макарова сăвăç (Аслă Чуллă), пĕр класра пĕлӳ илнĕ Н. Ефремовапа Т. Никифорова тата ыттисем те.

Çапла, Чăваш Енти Ĕç çыннин çулталăкне халалланă çулăн çав кунĕнче Еншик Чуллă ял историне тепĕр çĕнĕ страница çырăнчĕ. Историне вара çынсем тăваççĕ.

*Районти «Ял пурнăçĕ» хаçат,*
*2016 çулхи августăн 16-мĕшĕ.*

## 7. «Телее шан, ĕçлеме ан ман»

Ваттисен пурнăç çинчен калакан сăмахсем нумай. Акă, вĕсенчен хăшне-пĕрне аса илтерес килет: «Пурнăç пурăнса ирттересси уй урлă каçасси мар», «Пурнăç сакки сарлака», «Пурнăç тилхепине çирĕп тытас пулать», «Пурнăç урапи пĕр вырăнта тăмасть» тата ытти те. Çулĕсемпе аслăраххисем вĕсене татах та нумайрах пĕлеççĕ.

Еншик Чуллă ялĕн кăçалхи уявĕнче пурнăçăн анлă сукмакĕпе пĕр-пĕринпе шăкăл-шăкăл калаçса çур ĕмĕр хушши пурăнакан çемьесене те Тав çырăвĕсемпе тата

парнесемпе чысларӗҫ. Наградӑсем панӑ май, район администрацийӗн пуҫлӑхӗ С. Молотков вӗсене ҫамрӑксене кӑтартакан ырӑ тӗслӗхшӗн пур кӑмӑлтан тав турӗ, малашнехи пурнӑҫра ырӑ сывлӑхпа вӑй-хӑват тата пархатарпа кил ӑшши сунчӗ. Ку ҫемьесем хушшинче Валентина Васильевнапа Юрий Петрович Никитинсем те пулчӗҫ. Хамӑр ял (Аслӑ Чуллӑ) тата акупа йысну пулнӑран вӗсен ҫемйине ҫав тери аван пӗлетӗп. Пуҫламӑш класс ачи кӑна пулнӑ пулсан та, хаклӑ ҫыннӑмӑрсем пӗрлешнине аван астӑватӑп.



*Сӑнӳкерчӗкре: Валентина Васильевнапа Юрий Петрович Никитинсем ял уявӗнче Тав ҫырӑвӗ илнӗ хыҫҫӑн.*

Валентина Васильевна е хамӑрла - Валя аку ( вӑл - аннен йӑмӑкӗ) 1942 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗнче ҫӗр ҫине

килнĕ. Амăшĕ колхозра ĕçленĕ пулнă, ашшĕ – Василий Яковлевич – Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă. Хĕр çулне çитсен, вăл чылай вăхăт «Прогресс» колхоз правленийĕнче техслужащире ĕçлерĕ. Ку хушăрах хуçалăхри тĕрлĕ ĕçсене хутшăнчĕ. Каярахпа тăван ялти сысна ферминче кочегарта тăрăшрĕ. Тепĕр тапхăр фермăрах арман авăртрĕ. Кунтанах тивĕçлĕ канăва тухрĕ.

Юрий Петрович та – Аслă Чуллăсемех, 1939 çулхи сентябрĕн 2-мĕшĕнче çуралнă. 8 класс хыççăн инçетри çерем çĕрсене уçма тухса кайнă. Казахстанри «Октябрьский» совхозри 53-мĕш профтехучилищĕре анлă профильлĕ тракторист-машинист правине алла илнĕ. Инçетре тăватă çул вăй хунă. «Прогресс» колхозра трактористра тимленĕ, фермăра кочегар пулнă, асфальтпа бетон заводĕнче хуралçăра ĕçленĕ. Халĕ – тивĕçлĕ канура.

Никитинсем икĕ ача – хĕрпе ывăл - ӳстернĕ. Коля Çĕрпӳ районĕнчи Молодежнăй поселокри тимĕр алăксем тăвакан цехра ĕçлет, Лариса хальлĕхе пĕчĕк ачисене пăхать. Пилĕк мăнук вĕсен. Ялтах пурăнаççĕ те, кашни кунах пĕр-пĕрне кураççĕ. Хĕпĕртеççĕ мăнукĕсене курсан ĕç ветеранĕсем. Сад пахчи пуян вĕсен: улмуççисем, груша, çырла йывăççисем çитĕнеççĕ. Улма-çырлапа панулмирен татăк тăмаççĕ кĕр кунĕсенче, хĕл валли те упрама хураççĕ. Маларах Никитинсем выльăх-чĕрлĕх те йышлă тытнă, халĕ чăх-чĕп усранипех çырлахаççĕ. Кил картипе пахча-анкартире ĕçĕ пур пĕр самаях-ха. «Телее шан, анчах ĕçлеме ан ман», - теççĕ Валентина Васильевнапа Юрий Петрович.

Пурнăçра чи кирли - çемьере килĕштерни, тăвансемпе хутшăнни, ял-йышпа çураçни. Шăпах çавăн пек çынсем вĕсем Никитинсем. Пурнăçĕнчи паллă пулăм ячĕпе вĕсене ырлăх-сывлăхпа вăй-хăват суннипе пĕрлех тăванпĕтене, хăна-вĕрлене таса кăмăлпа йышăнма пархатар, кунпа пĕрлех кил ăшши, ачи-мăнукĕсемпе савăнса пурăнма тăнăçлăх сунатăп. Телейлĕ пулăр, Валентина Васильевнапа Юрий Петрович!

## 8. «Тăван ял сывлăшĕ уçăрах та сиплĕрех»

Тăван ялтан хакли çуках. Кирек ăçта пулсан та, хăй патне йыхравлатех, илĕртетех вăл. Пурте çапла шутлатпăр. Пурте пушă вăхăт тупăнсанах пĕчĕк тăван çĕршыва васкатпăр. Яла çитсен унăн уçă та сиплĕ сывлăшĕпе киленетпĕр. Куç умĕнчен кайма пĕлмен вырăнсене пăхса тăранаймастпăр. Кашни ялăн хăйĕн ытарми илемĕсем. Манăн тăван ял – Аслă Чуллă – акă, хăйĕн çырмисемпе, пĕвисемпе тата ватă йăмрисемпе мухтанма пултарать. Урамĕсемпе утса тухатăн та, çĕнĕ çуртсем ытларах та ытларах курăнма пуçларĕç. Çамрăксем хăпартаççĕ вĕсене. Апла пулсан ял малашлăхĕ пурах. Кирек епле ял та хăйĕн ят-сумлă çыннисемпе мухтанма пултарать. Манăн тăван ял та çаплах.

Акă, ялти Маркел Антонов строителе хисеплесе унăн ятне панă урамри Георгий Сергеевичпа Нина Макаровна Ивановсенех илер-ха. Пире ютах та тивмеççĕ-ха – аттеанне хутшăнатчĕç аслăраххисемпе. Хулара ĕçлесе пурăннăскерсем, иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсен вĕçĕнче (ун чухне Георгий Сергеевичăн амăшĕ чирлекелеме пуçăннăччĕ) яла куçса килчĕç. Пурнăçа кунта майĕпен

йёркелештерсе ячĕç вара: пӳрт-çурта, хуралтăсене, пахча-анкартине юсаса çĕнетрĕç. Вырьăх-чĕрлĕх усрама тытăнчĕç. Халĕ те тытаççĕ: сурăхсем, хур-кăвакалĕ, чăххи-чĕппи пур. Вĕлле хурчĕсем те пыл памасăр тăмаççĕ. «Тăван ял сывлăшĕ уçăрах та сиплĕрех», - çирĕплетет кил хуçи. Çапла пулмасăр, тĕрĕс сăмахсем.

... Георгий Сергеевич 1948 çулхи ноябрĕн 21-мĕшĕнче Аслă Чуллăрах çуралнă. Еншик Чуллăри вăтам шкулта 11 класс вĕренсе пĕтернĕ. Çарта пулнă, хĕсмете Тула хули çывăхĕнчи ракета çарĕсенче ирттернĕ. Таврăнсан, милици органĕсене ĕçлеме кайнă. Ку хушăрах Елабугăри милици шкулĕнчен вĕренсе тухнă. Сержант Шупашкар хулинче каçхи милиционерта, участковăйра, аслă участковăйра вăй хунă. И. Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультетне кӳртĕм майпа вĕренсе пĕтернĕ хыççăн 1986 çулта Г. Иванова республикăри шалти ĕçсен министерствин аппаратне ĕçлеме илнĕ. Малтанласа аслă инспекторта вăй хунă. Каярахпа Чăваш Енти мĕн пур участковăйсемпе (323-ĕн пулнă вĕсем, кăштахран йыш икĕ хут ӳснĕ) ĕçлекен пай начальникĕн çумĕнче тăрăшнă. Унтанах 1997 çулхи декабрĕн 30-мĕшĕнче милици подполковникĕ тивĕçлĕ канăва тухнă.

Нина Макаровна вара Комсомольски районĕнчи Хирти Мăнтăр ялĕнче çуралнă. Тĕп хуламăрти тĕрлĕ столовăйра поварта вăй хурса тивĕçлĕ канăва кайнă. Ялти пĕр ĕç те ют мар уншăн та – тиркесе-туса тăмасть пĕртте.



*Сăнӳкерчĕкре: Георгий Сергеевичпа Нина Макаровна чыслав хыççăн.*

Вĕсем 1971 çул пуçламăшĕнче çĕнĕ çемье йĕркелесе çырăннă. Икĕ ачана – хĕрпе ывăла - пурнăçăн анлă çулĕ çине кăларнă. Хĕрĕ – Татьяна - çĕвĕçĕ, Шупашкарта ĕçлесе пурăнать. Мăшăрĕпе икĕ ача ӳстернĕ, Александра аслă шкула хĕрлĕ дипломпа пĕтернĕ, халĕ – промышленноç тракторĕсем туса кăларакан заводра тимлет, Перасковья техникумра вĕренет. Ывăлĕ – Дмитрий – аслă пĕлӳллĕ, строительствăра вăй хурать, унăн ачи - 2 çул çурăра. Хĕпĕртесе савăнаççĕ Иванов-аслисем ачисемпе тата мăнукĕсемпе. Килсех çӳреççĕ те, пушшех те.

Нумаях пулмасть иртнĕ Еншик Чуллă ял уявĕнче Георгий Сергеевичпа Нина Макаровнана, пĕрлешнĕренпе 45 çул çитнĕ май саламласа, район администрацийĕн пуçлăхĕ С.

Молотков Тав ҫыврӑвӗпе тата парнепе чысларӗ, юрату ҫулӑмне чыслӑн упраса пурӑнма ыр сывлӑхпа вӑй-хӑват сунчӗ. Мӗнех, ҫаплах пултӑр та!

## 9. Аслӑ Чуллӑсем пысӑк пӗве тума ӗмӗтленеҫҫӗ

Тӑван ял ҫыннисемшӗн хӗпӗртетӗп эпӗ. Ҫӗнӗ ҫулӑн малтанхи кунӗсенче вӗсем ырӑ пуҫару турӗҫ. Мӗн тетӗр-и? Халӑхпа ниме йӗркелерӗҫ Аслӑ Чуллӑсем, пысӑк пӗве тума ӗмӗтленеҫҫӗ.

Пӗве тенӗрен пур-ха вӑл кунта. «Маркки пӗви» теҫҫӗ ӑна. 1950-мӗш ҫулсен варринче тунӑскер. Унтанпа ку пӗвене пӗрре те тасатман. Типсе ларма та пуҫланӑччӗ. Тавралла лартса ӳстернӗ йӑмрасем хӑрма-ҫӗрме, пӗвенелле ӳксе шыва варалама та тытӑннӑччӗ. Ҫавӑнпах Еншик Чуллӑ ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗн А. Тихонован тата ял старостин А. Григорьеван пуҫарӑвне ырласа, Аслӑ Чуллӑсем пысӑк ӗҫе кӳлӗннӗ. Вӗсем, алла бензопӑчкӑсем тытса, йӑмрасене касса ваклама тытӑннӑ.

Альбина Владимировна чӗннипе пулса куртӑм ку вырӑнта. Ҫынсем чылайӑнччӗ - ҫамрӑксем ытларахчӗ. К. Семенов вара, 68 ҫулта пулсан та, килте ларас темен, хӑйне евӗр бригадир вӑл кунта. Вӑй хуракансене кӳрентерес килмерӗ – пурин ят-хушаматне те ҫырса илтӗм. Акӑ вӗсем хастарсем: Л. Тихонов, Ф. Семенова, А. Александров, О. Тихонов, А. Тихонов, В. Чернов, А. Григорьев, В. Григорьев, А. Павлов, К. Васильев, Ю. Николаев, В. Николаева, В. Никитин, С. Ярков, Е. Васильева, Г. Иванов, Н. Иванова, К. Васильева, П. Беззубов, Р. Андреев, В. Васильев, С. Васильев, А. Фомин,

Н. Батраков, Р. Николаева, Е. Михайлова, Ю. Батраков, В. Батраков, Н. Павлов, Л. Синева, С. Георгиев, Ю. Иванов, С. Николаев, П. Евграфов, Д. Иванов.

Спонсорсен йышĕнче – райпон Еншик Чуллăри лавкки, В. Петров хресчен фермер хуçалăхĕ, А. Григорьева, Ю. Георгиев, В. Филиппов, Л. Синева, Н. Иванов тата Ф. Семенова. Бензинпа О. Тихоновпа А. Тихонова тивĕçтереççĕ.

Хăйсен ырă ĕмĕтне те уçса пачĕç ял çыннисем. Вĕсем малтанхи пĕве вырăнне тасатса пысăкраххине тăвасшăн. Шыва кĕрсе тасалма, пулă ĕрчетме, канма çывăхра ятарлă пĕчĕк çурт туса лартма ĕмĕтленеççĕ Аслă Чуллăсем. Пĕве вырăнне тасатмашкăн «ТУС» пĕрлешӳ филиалĕ – строительство керамикин «КЕТРА» завочĕ пулăшма пулнă. Унти карьер начальникĕпе А. Лаврентьевпа çыхăнтăм та, Анатолий Лаврентьевич çакă чăнлăхпа килĕшсе тăнине çирĕплетрĕ. Хальлĕхе вара йывăçсенчен тасатса хăватлă техника валли ĕç фрончĕ хатĕрлеççĕ ял çыннисем. Вĕсен ырă ĕмĕчĕ пурнăçа кĕретех.

*Районти «Ял пурнăçĕ» хаçат, 2016 çулхи январĕн 19-мĕшĕ.*

## 10. Ырă йăлана упрани — аталану çăлкуçĕ

Еншик Чуллăри вăтам шкулта тĕрлĕ мероприятисем çине-çинех иртеççĕ. Акă, хальхинче «Ĕç çынна илем кӳрет» ятпа тĕлпулу йĕркелерĕç. Ăна Чăваш Енри Ĕç çыннин, Трак енри Э. М. Юрьевăн çулталăкне, Чăвашрадио 90 çул тултарнине халалларĕç.

Тĕлпулăва ветеран-педагогсене — ку шкула 1965 çулта килнĕ, 1981—1987 çулсенче директорта вăй хунă, педагогикăри ĕç стажне 48 çула çитернĕ РФ тата ЧР тава тивĕçлĕ учительне Г. Андреевана, 40 çула яхăн физика учителĕнче тăрăшнă ЧР тава тивĕçлĕ учительне К. Афанасьева, Чăвашрадион ача-пăча передачисен редакторне Г. Вастрюковага (Галина Витальевна Муркаш районĕнчи Вомпăкасси ялĕнче çуралнă), çак шкултан вĕренсе тухнисене — Чăвашрадион музыка передачисен редакторне И. Канавичевана тата районти «Ял пурнăçĕ» хаçатăн ял хуçалăх, промышленность тата строительство пайĕн редакторне В. Данилова чĕннĕ. Хăнасене вĕренекенсем çăкăр-тăварпа, çĕкленӳллĕ юрăпа кĕтсе илчĕç.

Сăмах май, мероприятисен планĕн программипе килĕшӳллĕн, шкулта хăйтытăмлăх кунĕ те пулчĕ. Учительсем вырăнне аслăрах классене çӳрекенсем йышăнчĕç. 7-мĕш классем «Пирĕн ентеш — Ю. Петров (Вирьял) сăвăçа - 80 çул» урок ирттерчĕç. Хăйсен тепĕр ентешне И. Канавичевана халалласа, «Илемлĕ тавралăх чунра юрă-кĕвĕ çуратнă» фотостенд хатĕрлерĕç.

Тĕлпулăва килнисене Т. Беззубова директор шкулпа паллаштарчĕ. Татьяна Александровна пĕлтернĕ тăрăх, халĕ вĕрентӳ учрежденине çывăхри тĕрлĕ ялтан 55 ача çӳрет. Шкул çулĕчченхи ушкăнра — тата 18 пепке, вĕсемпе «Çулталăкри воспитатель-2016» районти конкурс çĕнтерӳçи В. Макарова ĕçлет. Хăнасем ку ушкăнра (пĕчĕккисем юрă парнелерĕç), 33-мĕш çул ачасене илемлĕхе курма, ал ĕçне хăнăхтаракан П. Евграфов педагог тытса тăракан декоративлă прикладной искусство музейĕнче, вĕренӳ пӳлĕмĕсенче, спортзалра пулса курчĕç.

Кунта директорта тимленĕ Г. Андреева çирĕплетнĕ тăрăх, ырă улшăнусем куç умĕнчех, коллектив çитĕнĕвĕсем сумлă, район ертӳлĕхĕ те шкулăн пурлăхпа техника никĕсне çирĕплетме укçа-тенкĕ парса пулăшма çине тăрать. Территорире илемлĕ чечексем çитĕнтереççĕ, ачасен апатне йӳнетме пахча çимĕçпе çĕрулми туса илеççĕ. Хăнасем хăйсен шухăшĕ-сĕнĕвĕсене ятарлă кĕнекере çырса хăварчĕç.

Унтан пурте пĕрле акт залне пуçтарăнчĕç. Тĕлпулăва Т. Беззубова директор уçрĕ, тĕрлĕ професси çыннисемпе йĕркелекен мероприятисен пĕлтерĕшĕ пысăккине, вĕсем пулас ăрăва ĕç çине çĕнĕлле пăхма, вăл е ку профессине тĕплĕн суйласа илме пулăшнине палăртрĕ.

Унччен кунта директор пулнă ят-сумлă Г. Андреева хăйĕн сăмахĕнче шкулăн хальхи коллективĕн ĕçне пысăка хурса хакларĕ. Ганна Петровна поэзи тусĕ пулнине те пĕлтĕмĕр: вăл хамăрăн ентешĕн — Ю. Семенов-Сементерĕн çамрăк ăрăва халалланă пĕр сăввине тата ыр кăмăллăха палăртса тăракан тепĕр хайлава пăхмасăр вуларĕ.

Тĕлпулăва район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ-вĕрентӳ пайĕн начальникĕ С. Григорьева та хутшăнчĕ. Светлана Анатольевна пухăннисене Воспитатель, Учитель тата Аслă ăру çыннисен кунĕ ячĕпе ăшшăн саламларĕ, Г. Андреевапа К. Афанасьев педагог-ветерансене район администрацийĕн Тав çырăвĕсемпе чысларĕ.

Тĕлпулура çавăн пекех К. Афанасьев ветеран-педагога, Чăвашрадио ĕçченĕсене — И. Канавичевапа (вăл 1980 çултанпа тимлет кунта) Г. Вастрюковăна, районти «Ял пурнăçĕ» хаçатăн пай редакторне В. Данилова сăмах пачĕç. Вĕсем иртнĕ вăхăтсене аса илчĕç, хăйсен

коллективĕсен хальхи ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарчĕç, пулас журналистсен — В. Тимофеевăн, Д. Яковлевапа А. Данилован ыйтăвĕсене хуравларĕç. Т. Беззубова директорпа ку должноçра вăй хунă Г. Андреева тĕлпулăва хутшăннă журналистсене Тав хучĕсемпе чысларĕç, ачасем вара вĕсене чĕрĕ чечексем пачĕç.

Тĕлпулу шкул ачисен концерчĕпе (ăна музыка учителĕ Е. Порфирьева йĕркелесе пычĕ) вĕçленчĕ.

# 10. Хыҫ сӑмах

## Хаклӑ вулаканӑм!

Акӑ, эсӗ кӗнекен юлашки страницине вуласа ҫитрӗн. Килӗшрӗ-и унта ҫырни? Чун-чӗрене пырса тиврӗ-и? Тен, унти хайлавсемпе паллашнӑ хыҫҫӑн тӑван ял аса килчӗ пуль? Апла пулсан хамӑн тӗп тӗллевӗме пурнӑҫларӑм тесе шутлатӑп.

Чӑн та, тӑван ял евӗр хакли урӑх ҫуках-тӑр. Пӗчӗкле ӑша кӗрсе вырнаҫать те ҫакӑ, мӗн сывлӑш тухма пӑрахичченех пирӗнте упранать. Кирек ӑҫта пулсан та, кирек хӑш вӑхӑтра та асӑмран тухма пӗлмест вӑл. Ҫавӑнпах юрататпӑр та эпир ӑна. Тӑван ял ялан пурӑнтӑр, пуянлансах пытӑр, тетпӗр. Ҫакӑ вара пирӗнтен хамӑртан килет. Ялтан тухнӑ кашни ҫынран. Ку чӑнлӑха пурин те асрах тытасчӗ. Ҫапла мар-и-ха, ентешӗмсем! Апла пулсан, тӑван ялта тӗл пуличчен!

# 11. Усӑ курнӑ литература


1. Астӑвӑм – Память – Чебоксары, Чуваш. кн. изд-во, 1999, V том.

2. Астӑвӑм – Память – Чебоксары, Чуваш. кн. изд-во, 2006, IV том, часть 2.

3. В. Константинов. Трак тӑрӑхӗнчи ялсем. Красноармейски, 1995.

4. «Ял пурнӑҫӗ» хаҫат. 1976-2016 ҫулсем.

Николай Ершов

## Иксĕлми сан пултарулăх

*Виктор Данилов-Тавкил çыравçăна,*
*60 çулхи юбилейĕпе ырă сунса*

Эс ялан хаваслă чунлă,
Çепĕç - кăмăлу.
Тăван ял сан – Аслă Чуллă,
Вĕçĕм кăмăл ту.
Ун ятне куллен çĕкленĕ –
Мухтанмаллăх пур.
Чыс илмешкĕн ĕмĕтленнĕ –
Хисепне те кур.
Ун çинчен мĕн чухлĕ тухнă
Тĕрлĕ асилӳ...
Куç умне сахал-и тухнă
Çуратнă килӳ.
Тахçанах тĕллев сан пурччĕ –
Çирĕп ĕненӳ...
Акă, халь кун çути курчĕ
Сумлă кĕнекӳ.
Пултăр-и çуралнă ялшăн
Чăн паха парне.
Вăл та панă-çке-ха саншăн
Хăй пархатарне.
Кашни çыншăн пурнăç хаклă,
Ĕмĕр – иккĕ мар.
Кун-çулу пулсассăн чаплă –
Хăрмĕччĕ тымар.
Пултаруллă эс паян та,
Пикенсех çыран...
Пурлăху çине таян та –
Ӳсĕм ту ыран!..

Гурий Дубров

## Ыр пил панӑ Мӑн Ҫавал

*Виктор Михайлович Данилов журналиста*
*60 ҫулхи юбилейӗпе ырӑ сунса саламланӑ* май

Эх, илемлӗ Еншик Чуллӑ! –
Пулчӗ май ҫитсе курма.
Ҫыннисем те ырӑ чунлӑ,
Епле савӑк пурӑнма!
Ҫак ялта кун ҫути куртӑн,
Данилсенӗн йӑхӗнче.
Чуллӑ шкулӗнче ӑс пухрӑн –
Саншӑн ирӗк ҫут тӗнче!
Чуллӑ ҫӗрӗ анлӑ, сумлӑ
Сарӑлса выртать таҫтан.
Кунта эсӗ ҫунат сарнӑ,
Ыр пил панӑ Мӑн Ҫавал.
Ӳсе ҫитӗнтӗн, яшлантӑн,
Тытрӑн ҫул тӗп хулана.
Ик дипломлӑ эсӗ пултӑн, -
Ҫивӗчлетрӗн ӑс-тӑнна.
Вӑтӑр ҫул хушши янрарӗ
Сассу санӑн эфирта.
Трак ен халӑхӗ итлерӗ
Кунсерен ҫӗн хыпара.
Академик ячӗ сумлӑ –
Халӑх панӑ чыс-хисеп.
Чӑннипех, кӑмӑл сан уҫӑ! –
Ҫут малашлӑх пехиллет.
Тӑван «Ял пурнӑҫӗ» хаҫачӗ
Танлаштарчӗ хӗрӗхпе.
Иксӗлми чӗре апачӗ –
Пурӑнатӑн хисепре!
Мӑшӑрпа тату пурнатӑн –
Виҫ ача та пилӗк м(ӑ)нук.
60 ҫул патвар утатӑн,
Кун кунлатӑр хастар чун

# Тупмалли

1. Ум сăмах ........................................ 1

2. Ял-йыш вĕсене вăрçăран кĕтсе илеймен ........................ 3

3. Паттăрлăхĕ чун-чĕресенче упранать ........................ 16

4. Ĕçлеме кăна мар, савăнма та пĕлеççĕ ........................ 18

5. Аслă Чуллăсем çумăра пăхмасăрах савăнчĕç ........................ 22

6. Тăван ял историне хамăр çыратпăр ........................ 29

7. «Телее шан, ĕçлеме ан ман» ........................ 34

8. «Тăван ял сывлăшĕ уçăрах та сиплĕрех» ........................ 37

9. Аслă Чуллăсем пысăк пĕве тума ĕмĕтленеççĕ ........................ 40

10. Ырă йăлана упрани – аталану çăлкуçĕ ........................ 41

11. Хыç сăмах ........................ 45

12. Усă курнă литература ........................ 45

13. Николай Ершов. Иксĕлми сан пултарулăх ........................ 46

14. Гурий Дубров. Ыр пил панă Мăн Çавал ........................ 47

ВИКТОР ДАНИЛОВ

ПУРĂН, ЕНШИК ЧУЛЛĂ, ПУРĂН!

*На чувашском языке*

Компьютерный набор В. М. Данилова

Корректор В. М. Данилов

Компьютерная верстка Э. И. Иванова

Физ. исп. л. – 3,5 л.
Тираж 50 экземпляров



# Виктор Михайлович Данилов

1957 çулхи февралĕн 24-мĕшĕнче Красноармейски районĕнчи Еншик Чуллă ялĕнче çуралнă. Еншик Чуллăри вăтам шкултан (1974),партин Чул хулари аслă шкулĕнчен (1990),патшалăх служжбин Атăл-Вятка академийĕнчен (2009) вĕренсе тухнă.

1976 çулхи июльтен районти "Ял пурнăçĕ" хаçатра корреспондентра, радиоорганизаторта, радиовещани редакторĕнче ĕçленĕ. 1977-1979 çулсенче Совет Çарĕнче служжбăра тăнă. 1995-2010 çулсенче район администрацийĕнче яваплă тĕрлĕ должносçра тимленĕ. 2011 çултанпа-районти "Ял пурнăçĕ" хаçатăн ялхуçалăх, промышленность, строительство пайĕн редакторĕ. 1988 çултанпа - Раççей журналисчĕсен,Союзĕн членĕ, журналистсен районти организацийĕн секретарĕ. Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ (2014),Чăваш халăх ăсчахĕ (2016), Н.Янкас премийĕн лауреачĕ (2009). Ăна "90лет профсоюзу работников госучреждений" медальпе, "За активное участие в проведнии Всероссийской переписи населения 2002 года" тата "За активное участие в проведении Всероссийской сельскохозяйственной переписи 2006 года" паллăсемпе, РФ тата ЧР журналистсен Союзĕсен Хисеп грамотисемпе (2015) наградăланă.
"Эсир юратнă юрăсем" (1992), "Ялан юрлать чĕре" (1994) юрă кĕнекисене пухса кăларакансенчен пĕри. "Трак ен" (2000) кĕнеке кăларма хутшăннă. "Красноармейский район. Люди и судьбы" (2005) кĕнеке редколлегийĕн членĕ. 2014 çулта О.В. Афанасьевапа пĕрле "Мăнаçланатпăр санпа,Кĕçĕн Чуллă!" (историллĕ очерк) кĕнеке пичетлесе кăларнă.